Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕ

# «Таçта ĕçлесен те чун ялах туртрĕ»

***Манăн умра вăтам çулсенчи кĕрнеклĕ арçын ларать. Сасă хăпартса курмансќер кашни сăмаха çиччĕ виçсе калаçать. Кунпа пĕрлех хăй ял çыннин килти хушма хуçалăхне кирлĕ техникăна тăвассипе пĕрремĕш çул мар интересленнине, çакă ял çыннин ĕçне ансатлатма тата продукци туса илессине ӳстерме çул уçассине ĕненнине тĕслĕхсемпе çирĕплетет. Калаçу вăрăма тăсăлмарĕ пулин те, Мăн Шашкарта çуралса ӳснĕ 50 çул та тултарман Петр Владимирович АНДРЕЕВ хăйĕн пĕтĕм ĕç ĕмĕрне ял пурнăçне халалланине темиçе те палăртса илчĕ. Çакна чăн çĕр ĕçченĕ çеç тума пултарать-тăр. Халĕ сирĕн ума кăларакан пирĕн калаçу çакна çирĕплетсе пачĕ те.***

**– Эсир, Петр Владимирович, ял çынни валли килти хушма хуçалăхра усă курмалли пĕчĕк техника ăсталассипе тăван енре паллă пулнине пĕлетĕп. Ăçтан çуралчĕ-ха ку интерес тата мĕнре-ха унăн никĕсĕ?**

– Пĕр кунта никĕсленнĕ пулăм мар вăл. Çакăнта мана атте-анне çĕр-аннемĕре юратма вĕрентни тĕп вырăнта пулĕ. Шăпах вĕсем мана ĕçе вĕрентнĕ, çăкăр йывăç çинче çитĕнменнине ăнлантарнă. Тавах вĕсене çакăншăн. Паян шутлатăп та, эпĕ çак ĕç валлиех çĕр çине килнĕ. Манăн тĕп специальность – токарь. Пурнăç урапи мана токарь станокĕ умне епле илсе çитерни – хăйне евĕр истори.

**– Ял ачишĕн техникăпа ĕçлесси чи кăткăсли пек туйăнать те...**

– Çапла пулĕ-ха та, анчах 1978 çулта Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкултан аттестат илсе тухсан манăн тĕллев урăхларах пулнă: манăн педагогика институтне музыка учительне вĕренме кĕрес шут пысăкчĕ. Анчах шкулта ку тĕлĕшпе пуçламăш пĕлӳ илейменрен манăн пĕрремĕш çул хупăнчĕ, анчах тĕллев пĕтмерĕ. 9-мĕш класра вĕреннĕ чух больницăра выртма тивнĕччĕ. Çавăн чух пĕрле выртакан арçын мана ӳссен токарь-универсал пулма хушни те пуçрахчĕ, анчах эпĕ вăл вăхăтра токарь профессине пачах та ăнланмасттăм: мĕн тăвать вăл, кама кирлĕ? Анчах пурнăçра музыкçă пулас ĕмĕт темĕнле вăйлă пулчĕ пулсан та, ĕмĕр сакки токарь станокĕ патнех илсе çитерчĕ.

**– Чун килĕштермен ĕçе суйларăр-и вара?**

– Апла калас килмест. Пединститута кĕреймерĕм пулсан та ĕмĕтĕм сӳнмерĕ. Ăна пурнăçласса кăшт каярах хăварса Шупашкарти Чапаев ячĕллĕ резинăпа техника изделийĕсен заводне ĕçе кĕтĕм. Ĕç ĕмĕрне кĕпе çумалли машинăсем валли упаковка ещĕкĕсем ăсталанинчен пуçларăм. Çакăн чухне кăнтăр апатне иртсе çӳренĕ чух куртăм та ĕнтĕ токарь станокĕпе ĕçленине. Пĕрремĕш тĕл пулурах унпа ĕçлекен çавра металран деталь ăсталани килĕшсе кайрĕ. Çак тĕл пулу çамрăклăх ĕмĕтне пĕтермесĕрех манăн пурнăçа тĕпрен улăштарчĕ. Çав çулах завод çумĕнчи токарьсемпе фрезеровщиксем хатĕрлекен курса вĕренме кĕтĕм. Вĕренсе тухсан пĕр хушă заводра механика цехĕнче токарь ученикĕнче вăй хутăм. Анчах çăва çитсен музыкçă тĕллевĕ мана заводпа сыв пуллаштарчĕ. 1979 çулта эпĕ Çĕрпӳри культпросвет училищĕне вĕренме кĕтĕм. Анчах пурнăç условийĕсем килĕшменрен 2 уйăхран тепĕр



Петр Андреев хăй ăсталанă агрегатпа утă-улăм ваклать.

юлташпа Шупашкара таврăнтăмăр. Музыка училищине кайса пăхрăм, анчах кая юлнăмĕн. Ăçта каймалла? Машинăсем тăвакан завода токарь пулса ĕçлеме вырнаçрăм. Ял пурнăçĕ туртни ун чухнех сисĕннĕ-тĕр, 5 уйăхран Муркашри ял хуçалăх техникине юсакан пĕрлешĕве водительсен курсне вĕренме çитрĕм. Анчах водительре ĕçлеймерĕм. Нумай шутланă хыççăн çамрăксен хастарлăхĕпе 1980 çулта Шупашкарти тракторсем тăвакан завода ĕçе вырнаçма кайрăм: токарь-универсал шухăшĕ те музыкçă пекех малта тăратчĕ ĕнтĕ. Çакăнта алла илме пуçларăм та ĕнтĕ эпĕ токарь ĕçне.

**– Яла епле таврăнтăр-ха?**

– Кĕске хурав мар вăл. Нумай йывăрлăха çĕнме тиврĕ çак çул çинче. 1983 çулта çемье çавăртăм та çемьерен уйрăммăн пурăнас килмерĕ. Вара Мăн Сĕнтĕрти юсавпа техника предприятине токарь пулса ĕçлеме вырнаçрăм. 4 çул вăй хутăм кунта. Хамăн ĕçе лайăх пĕлекен пулса çитрĕм, анчах кĕвĕ грамоти хуланах туртса илчĕ. 90-мĕш çулсем пуçламăшĕнче çĕршывра пулса иртнĕ пысăк улшăнусем манăн малалла вĕренес шухăша сирчĕç. Çапла вара эпĕ çакăн хыççăн виççĕмĕш курса хыça хăварса (вĕренĕве пăрахса) 1992 çулта яла таврăнтăм. Çĕршыври çĕнĕ саккунсем манăн çамрăк чухнех амаланма пуçланă уйрăм çын харпăрлăхĕпе ĕçлес туйăма пурнăçлама çул уçрĕç. Вара эпĕ 1994 çулта районта малтисен шутĕнче «Сапфир» хресчен (фермер) хуçалăхĕ йĕркелерĕм.

**– Ку вăхăта Сирĕн техникăпа интересленесси мĕнле шайра пулнă?**

– Ăстăватăп, хулара «Октябрь» кинотеатрта кино пуçланиччен кăтартнă документлă фильмра пĕр эстонец лаша хыçне кăкарнă копалкăпа çĕр улми кăларнине кăтартрĕç. Манăн çав техникăна хамăн харпăрлăхра тытас шухăш çуралчĕ. «Сельский механизатор» журнал урлă Эстонири адреса тупса унта çыру çырсан, çур çултан ман пата тӳлевсĕрех чертежсем килсе çитрĕç. Нумай тăхтамасăрах пĕр копалка ăсталарăм. 80-мĕш çулсен вĕçĕччĕ. 90-мĕш çулсен пуçламăшĕнче çав копалкăн чертежĕсемпе хама валли токарь станокĕ илес ĕмĕт çуралчĕ. Çав вăхăта ку манăн тĕп тĕллевччĕ. Урамра 1993 çул. Тепĕр 3 çултан çав организацие манăн чертежсемпе мĕнле ĕçленине тесе пăхма кайрăм та вĕсем панкрута тухнине пĕлтĕм. Вара 3 михĕ çĕр улмилле вĕсем ăсталама пуçланă çав копалкăна хам валли «туянтăм». Килте юлашкине майлаштарса пĕтертĕм те паян та унпа усă куратпăр.

**– Сирĕн килти хуçалăхра паян токарь станокĕ çеç мар вĕт-ха?**

– Хамăн ĕмĕтсене пурнăçа кĕртме пĕр станокпа çеç çителĕксĕрне ăнланса 2003 çулччен фрезер станокĕ, сверлопа ĕçлемелли станок т. ыт. те туянтăм. Манăн хресчен (фермер) хуçалăхĕ сулăмлă ĕçлеме пуçларĕ. Станоксем хамăн харпăрлăхра пулни татах çĕнĕ шухăшсем çуратрĕ: ял çыннине валли алăпа ĕçлеме тĕкмелли меллĕ урапа хатĕрлемелле. Урапа валли вара тимĕр пай – обод – кирлĕ. Çавна валли хамăн килти мастерскойĕнчех 5-6 станок ăсталарăм. Конвеер йĕркипе икĕ обод тусан савăннипе 3 кун ĕçлеймерĕм: вăй хушăнчĕ, çĕнĕ тĕллевсем никĕсленчĕç – тăрăшсан ялтах темĕн те тума пулать иккен! Çакăн хыççăн 4-5 çул каялла хамăн килти хушма хуçалăхрах соломорезка, кăшман турамалли-вакламалли агрегат, вĕсене йӳнетмелли технологие, универсал урапа, мотоблокураписем тăвассине алла илме пуçларăм.

**– Паян та хресчен (фермер) хуçалăхĕпех ĕçлетĕр-и?**

– Çĕрĕсем пур, паллах, анчах паян эпĕ – выльăх-чĕрлĕх патĕнче ĕçлеме кирлĕ пĕчĕк машина-агрегатсем тăвассипе ĕçлекен индивидуаллă предприниматель. Хамăн хресчен (фермер) хуçалăхĕ чух тунă çурма çĕр айĕнчи хранилищĕре механика цехĕ уçасси – манăн çывăх тĕллев.

**– Апла пулсан çынсем паян пурăнма йывăр тени сирĕншĕн мар?**

– Эпĕ япăх пурăнатăп та уншăн патшалăх айăплă тесе халиччен те шутламан. Çынсем тунине манăн мĕншĕн тумалла мар? Эпĕ ыттисенчен мĕнпе кайра тăратăп? Çак ыйтусем çине кашни çын хăй кăна хурав парайрать. Манăн пурнăç тавракурăмĕ çапла.

**– Кĕскен çемйĕрпе паллаштарсамăр.**

– Манăн мăшăрăм – Людмила Анатольевна – учительница. Вăл чĕрĕк ĕмĕр Ильинка ял тăрăхĕнчи Вăрманкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта ачасене физикăпа математика вĕрентрĕ. Пирĕн икĕ ача – Костьăпа Саша. Асли БСМПра фельдшер пулса ĕçлет. Кĕçĕнни Чăваш патшалăх университечĕн машинăсем тăвакан факультетĕнче вĕренет.

**– Эсир йывăрлăхсем умĕнче алă усманни пирĕн вулакансемшĕн те тĕслĕх пуласса шанатпăр.**

– Çапла пултăрччĕ те. Çĕр ĕçĕнчен хăраман хресчен йывăрлăхсене маххă памастех.

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

Çын тата саккун

# Тĕрмере те тĕрĕслĕхе вĕрентеймен...

Пĕрре кĕнĕ шыва иккĕ кĕме çук тенĕ-ха та пĕр ăсчах, анчах пирĕн хушăмăрта çак вĕрентĕве сивлекенсем, ăна тепĕр майлă çавăрса кăтартакансем те çук мар-ха.

Шупашкар районĕнче пурăнакан В. Улеевшăн та 2001 çулхи февралĕн 27-мĕшĕнче хăйне 8 çуллăха ирĕкрен хăтарма йышăннă суд приговорĕ пурнăçра тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳсем тума вĕрентмен пулас. Анчахрах «кирпĕч шутласа тухнă» арçын 2009 çулхи çĕртме уйăхĕн 11-мĕшĕнче çур çĕрле каллех йĕрке пăсас çул çине тăнă. Ку хутĕнче 42 çулхи Вова Сыпайри А. Козловăн килти хушма хуçалăхĕнчи хурал пӳртĕнчен саккуна пăссах çăмăллăн пуяс тĕллевпе тĕслĕ кăтартакан «Рубин» телевизор (1500 тенкĕ), 2500 тенкĕ таракан микрохумлă кăмака, 350 тенкĕлĕх «Тефаль» электрочейник, 25 тенкĕлĕх çĕçĕ йăкăртса тухать.

Кил хуçи çухату пирки шалти ĕçсен пайне пĕлтерсен йĕрке хуралçисемпе çийĕнчех пуçарнă шыравра саккуна пăсса пуяс çул çине тăнă арçыннăн çулĕ çине тухрăмăр. Уголовнăй ĕç пуçарсан следстви ĕçĕсем икĕ уйăха яхăн пычĕç.

Çурла уйăхĕн 5-мĕшĕнче асăннă ĕçпе Муркаш район сучĕн ларăвĕ пулчĕ. Судра В.А. Улеев хăйĕн айăпне пĕтĕмпех йышăнчĕ.

В.А. Улеев тунă преступлени вăтам йывăрлăхлă преступленисен шутне кĕрет. Преступник ниçта та ĕçлемест, часчасах эрех ĕçет, врач-нарколог патĕнче 2-мĕш степеньлĕ алкоголизм диагнозпа учетра тăрать.

Преступник «ĕçне» тивĕçлипе хак парса район сучĕ В.А. Улеева Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕн 158 статйин 2-мĕш пайĕн «в» пунктĕнче пăхнă преступление тунă тесе çирĕп режимлă колонире икĕ çуллăх ирĕкрен хăтарма приговор кăларчĕ.

**К. ПЕТРОВ, районти шалти ĕçсен пайĕ çумĕнчи следстви уйрăмĕн ертӳçи.**

Турай ял тăрăхĕнчен пĕлтерессĕ

# Ватлăхăр канлĕ ирттĕр

Ватта сума сăвакансем иртнĕ кунсенче Çуткӳлти ял клубне ĕçлесе тава тивĕçлĕ канăва тухнисемпе, вăрçăпа ĕç ветеранĕсемпе пĕрле пуçтарăнчĕç. Тĕл пулăва Турай ял тăрăхĕнчи культура ĕçченĕсенчен йĕркеленĕ агитбригада ушкăнĕ савăнăçлă концерт программипе уçрĕ.

Уявăн пĕр хаваслă саманчĕ çинче уйрăммăн чарăнса тăрас килет. Çак кунхи савăнăçлă кĕрекере Çуткӳлте 50 çул пĕрле пурăнакан Роза Григорьевнапа Алексей Федорович Портновсем хăйсен çемье юбилейне халăхпа пĕрле паллă турĕç.

52 çул каялла Çĕрпӳри ял хуçалăх техникумне ăнăçлă вĕренсе пĕтернĕ хĕре агроном дипломĕпе Муркаш районĕнчи Çуткӳлти «Восход» колхоза ĕçлеме яраççĕ. Чун ыйтнипе çĕр ĕçне суйласа илнĕ хĕр çанă тавăрсах ĕçе кӳлĕнет. Роза агроном хиртен татăлмасть. Механизаторсем патĕнче те пулать вăл, уй-хир ĕçченĕсем патĕнче те. Кашни ушкăнрах сăмах тупать, агротехника ыйтăвĕсемпе вĕрентӳллĕ калаçусем ирттерет. Ĕçне чунĕпе парăннă хĕре Алексей Федорович Портнов механизатор асăрхать. Асăрхать те куçран вĕçертмест. 1959 çулта çамрăксем пĕр-пĕрне юратнипех çемье çавăраççĕ, малашлăхпа пурăнма пуçлаççĕ. Унтанпа 50 çул хыçа юлчĕ. Нумай та мар, сахал та мар ку тапхăр. Юратнă ĕçшĕн, тăван çĕр-аннешĕн тăрăшни сахал мар пулнă вĕсен çак хушăра. Ответлăха туйса ĕçленипех вĕсем паян ялта тава тивĕçлĕ те сумлă çынсем.

Ĕмĕрĕн саралака та тумхахлă çулĕпе утса ĕçрен юлмасăрах пĕр мăшăр Портновсем 3 ывăлпа 3 хĕр çуратса ӳстернĕ. Ӳстернĕ те ачисене пурнăçра хăйсен вырăнне тупма пулăшнă. Паян вĕсем çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕсенче ашшĕамăшĕн ырă ятне малалла тăсаççĕ. 13 мăнукĕ çуллахи вăхăтра аслашшĕпе асламăшĕ патĕнче чух Портновсем тулăх пурнăçпа пурăнни курăнать. Уявра та çак туйăм залран каймарĕ.

Çак кун уява пухăннă ватăсем савăнăçлă каçа çавра сĕтел хушшинче вĕçлерĕç. Çамрăклăх юррисем, аса илӳсемпе шӳтсем чылайччен татăлмарĕç. Турай ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А. Павлов тата Муркаш райпо Канашĕн председателĕ Б. Андреев хăйсене саламланине уява пухăннисем пысăк чыс тесе йышăнчĕç.

**Л. ВАСИЛЬЕВА, Çуткӳлти ял библиотекарĕ.**

По материалам прокуратуры

# В пожарной части потушена коррупция

Надзор за соблюдением законодательства о муниципальной и государственной службе, противодействии коррупции является одним из приоритетных направлений деятельности органов прокуратуры Моргаушского района Чувашской Республики. Несмотря на кажущуюся неактуальность проблемы коррупции в сельской местности, анализ работы показал, что данная проблема стоит не на последнем месте.

Всего в ходе осуществления надзора за соблюдением законодательства о противодействии коррупции за 8 месяцев 2009 года выявлено 52 нарушения, опротестовано 22 незаконных правовых акта, направлен 1 иск на сумму 52 000 рублей, внесено 8 представлений об устранении нарушений закона, по рассмотрению которых 5 лиц привлечено к дисциплинарной ответственности, 2 лица привлечено к административной ответственности.

По результатам выявленных в ходе «общенадзорных проверок» нарушений прокурором района инициировано 6 проверок в порядке ст. ст. 144-145 УПК РФ, по результатам которых возбуждено 2 уголовных дела: в отношении директора МОУ «Юнгинская СОШ» по ст. 285 ч.1, ст. 292 ч.1 УК РФ по факту предоставления своему родственнику подложных справок о работе учителем с целью последующего его уклонения от прохождения военной службы, вынесен обвинительный приговор, который вступил в законную силу, а также в отношении начальника ПЧ-37 с. Моргауши по ст. 285 ч.1, ст. 292 ч.1 УК РФ в связи с использованием своего служебного положения в корыстных целях и причинения материального вреда государству в сумме 216 510 рублей, вынесен обвинительный приговор.

Как показывает практика, должностными лицами органов местного самоуправления, а также должностными лицами государственных учреждений довольно часто допускаются нарушения при расходовании бюджетных средств.

Такая проверка прокуратурой района была проведена в пожарной части №37. В ходе нее была изучена документация по кадровому составу, штатное расписание, книги службы за 3 года.

Было установлено, что в пожарной части созданы 4 состава караула, осуществляющих суточное дежурство и выезжающих на тушение пожаров в случае их возникновения.

Детальное изучение нарядов на службу 4-ого караула позволило установить, что в период с 2007 года гражданин К., будучи включенным в личный состав 4-ого караула, на суточное дежурство не выходил, в состав караула во время дежурства не входил. Указанные наряды на службу утверждались начальником Моргаушской ПЧ-37 С.П. Митрофановым. Однако, несмотря на это, трудовые отношения с К. сохранялись, последний получал денежное содержание за счет средств федерального бюджета.

Указанные обстоятельства подтвердили опрошенные лица - заместитель начальника ПЧ-37, а также работники 4-ого караула. В связи с чем прокуратурой района была запрошена информация о начисленной и выплаченной К. заработной платы.

Согласно полученной информации следовало, что К. была начислена и выплачена заработная плата на сумму более 200 тысяч рублей, вместе с тем, в ведомостях о получении денежных средств имелись подписи начальника ПЧ-37 Митрофанова.

Более того, в состав выплаченной заработной платы были включены размеры премий, начисленных на имя К., по ходатайствам начальника ПЧ Митрофанова, за высокие показатели в работе!

В результате выявленных в ходе общенадзорной проверки нарушений, в отношении Митрофанова С.П. была проведена служебная проверка, по результатам которой он был снят с руководящей должности начальника ПЧ-37 с. Моргауши.

В отношении него возбуждены уголовные дела по ст. ст. 285 ч.1, 292, 159 ч.3 УК РФ, уголовное дело направлено в суд.

Приговором Моргаушского районного суда ЧР от 13 мая 2009 года Митрофанов С.П. признан виновным в совершении преступлений, предусмотренных ст. ст. 159 ч.3, 285 ч.1, 292 ч.2 УК РФ, ему назначено наказание в виде лишения свободы на срок 2 года 6 месяцев с лишением права занимать должности, связанные с выполнением организационно-распорядительных, административно-хозяйственных функций в государственных учреждениях сроком на 2 года с отбыванием наказания в исправительной колонии общего режима.

По представлению прокурора и жалобам подсудимого и защитника приговор изменен, из квалификации действий Митрофанова С.П. исключена ст. 285 ч.1 УК РФ, наказание снижено до 2 лет 4 месяцев лишения свободы. В остальной части приговор оставлен без изменения.

**Н. НИКОЛАЕВА.**